ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН
САККУНĔ

ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН "ТУРИЗМ ÇИНЧЕН" САККУНĔН 6.1 ТАТА 10 СТАТЙИСЕНЕ УЛШĂНУСЕМ КĔРТЕССИ ÇИНЧЕН

Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕ
2024 çулхи юпа уйăхĕн 24-мĕшĕнче
йышăннă

1 статья

Чăваш Республикин "Туризм çинчен" 1997 çулхи юпа уйăхĕн 13-мĕшĕнчи 16 №-лĕ саккунне (Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн ведомоçĕсем, 1997, 21 №; 2001, 40 №; 2004, 61 №; 2007, 73 №; 2008, 76, 77 №-сем; 2009, 80 №; "Республика" хаçат, 2012, юпа уйăхĕн 5-мĕшĕ; Чăваш Республикин Саккунĕсен пуххи, 2013, 12 №; 2016, 6, 12 №-сем; "Республика" хаçат, 2018, çу уйăхĕн 8-мĕшĕ; 2022, ака уйăхĕн 6-мĕшĕ; 2024, çĕртме уйăхĕн 27-мĕшĕ) çакăн пек улшăнусем кĕртес:

1) 6.1 статьяра:

а) ятĕнче "Чăваш Республикин ĕç тăвакан влаçĕн органĕ" сăмахсене "Чăваш Республикин ĕç тăвакан органĕ" сăмахсемпе улăштарас;

ă) пĕрремĕш абзацра "Чăваш Республикин ĕç тăвакан влаçĕн органĕ" сăмахсене "Чăваш Республикин ĕç тăвакан органĕ" сăмахсемпе улăштарас;

б) çакăн пек çырса вуннăмĕш çĕнĕ абзац хушса хурас:

"экскурсоводсене (гидсене) е гид-куçаруçăсене аттестаци тăвакан аттестаци комиссийĕ çинчен калакан положение, çав шутра кăтартнă аттестаци комиссийĕн составне çирĕплетесси;";

в) вуннăмĕш – вун иккĕмĕш абзацсене тивĕçлĕн вун пĕрмĕш – вун виççĕмĕш абзацсем тесе шутлас;

2) 10 статьяра:

а) ятёнче "(Чăваш Республикин патшалăх программин çум программи)" сăмахсене кăларса пăрахас;

ă) "(Чăваш Республикин патшалăх программин çум программи)" сăмахсене кăларса пăрахас;

2 статья

Çак Саккун ăна официаллă йёркепе пичетлесе кăларнă кунран пуçласа вăя кёрет.

Чăваш Республикин
Пуçлăхё О. Николаев

Шупашкар хули,
2024 çулхи юпа çуйăхён 25-мёшё
67 №